Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы

Çĕрпел территори пайĕ

# ПАЯНХИ ЯЛ

#регпроекты #нацпроекты

Çĕрпел территори пайне 3 ял кĕрет – Çĕрпел, Кайри Тукай, Хурăнсур Çармăс

*Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет*

# Пĕрлĕхре, килĕшӳре – вăй, ăнăçу тата çитĕнӳ

**Паянхи кун республикăри ял-хуласем тĕрлĕ программăпа çĕнелсе, капăрланса пыраççĕ. Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшса тăвакан хăтлăх – аталану çулĕн тĕллевĕ.**



■ *Çĕрпелсем ял хуçалăх кунĕнче.*

Çĕрпел тăрăхĕнче те инфраструктурăна çĕнетес тĕлĕшпе юлашки çулсенче курăмлă чылай ĕç пурнăçларĕç. Вĕсене наци проекчĕсене, патшалăх пулăшăвне кура ĕçе кĕртрĕç.

– Чăн та, Çĕрпел территори пайĕнче юлашки çулсенче пысăк ĕçсем пурнăçланчĕç. Вырăнти ырлăх, паллах, халăх хутшăнмасăр пулмарĕ. Ял çыннисен хастарлăхне, пĕршухăшлăхне пула чылай проекта ăнăçлă татса пама пултартăмăр, – пĕлтерчĕ, акă, Вăрнар муниципаллă округĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш заместителĕ Сергей Петров, маларах шăпах та Çĕрпел ял тăрăхне ертсе пынăскер.

Территори пайĕн тĕп задачи, пĕлетпĕр ĕнтĕ, – çынсене пурăнма, ĕçлеме тата канма, хăйсен вăхăтне усăллă ирттерме лайăххах майсем туса парасси, обществăлла йĕркелĕхе тата пурнăç хăрушсăрлăхне тивĕçтересси. Хăйсен тĕп ĕçĕсене йĕркелесе пынă май, шăпах çак тĕллевсене тĕпе хунă, хураççĕ те ĕнтĕ унчченхи пуçлăх тата паянхи ертӳçĕ Инна Трофимова.

Хальхи вăхăтра вырăнти укçатенкĕпе çеç яла аталантарма, инфратытăма çĕнетме çăмăл мар. Çавăнпа та май пур таран патшалăх паракан пулăшупа усă курни аван. Çĕрпел тăрăхĕнче пурăнакансем те юлашки çулсенче ял сăнсăпатне илем кӳрекен, аталанăва кăтартакан курăмлă улшăнусемпе кăмăллах ĕнтĕ.

Ял халăхне пăшăрхантаракан ыйтусенчен пĕри вăл – çул. Вĕсем тирпейленсе пыни – ырă кăтарту. Акă, çак çулсенче Çĕрпел тăрăхĕнче те ку енĕпе сахал мар ĕç тума май килнĕ. Висĕмçул Кайри Тукайĕнчи Молодежная, 1 Мая, Союзная, Кооперативная урамсенчи тата Солнечнăйпа Набережнăй тăкăрлăксенчи çулсене вак чул сарса хытарнă. Унтан тепĕр тапхăрпа Солнечнăй тăкăрлăкăн тепĕр пайне якатма май килнĕ.

Пĕлтĕр çул-йĕр ĕçĕсем Çĕрпел салинче пынă. Коммунистическая, Комсомольская урамсенчи лаптăксене, Çĕпритун Шăпчăк тăкăрлăкĕнчен пуçласа Комсомольская урам таранччченхи тăршшĕне çĕнетнĕ.

Кăçал Хурăнсур Çармăсри Зеленая тата Çĕрпелти Коммунистическая урамсенче юсав ĕçĕсем пурнăçланă.

Ялшăн кирлĕ те пĕлтерĕшлĕ çак ĕç çул-йĕр фончĕн укçи-тенкипе, çавăн пекех халăх хăй хутшăннипе – пуçарулла бюджет программипе пурнăçа кĕнĕ.

Пуçарулла бюджет тенĕрен, Çĕрпел тăрăхĕнче пурăнакансем ку программăпа çулсеренех висшер проекта çул панă. Акă, пĕлтĕрпе кăçал патшалăхпа халăх пĕрлешсе Çĕрпелти масар картине çĕнетнĕ. Ун тăршшĕ – 1 километр та 60 метр. Ĕç хакĕ – 1,5 млн тенкĕ. Ял çыннисем хăйсем 500 пин ытла тенкĕ хывнă.

Ку программăна хутшăнсах висĕмçул Кайри Тукайĕнчи Молодежная урамри пĕвене тасатнă, пушар пирсне йĕркене кĕртнĕ.

Пĕвесен, тĕрĕссипе, ялшăн çав тери пĕлтерĕшлĕ вырăн шутланаççĕ. Вĕсем пушар хăрушсăрлăхне те тивĕçтереççĕ. Çакна шута илсех ĕнтĕ ку тăрăхра пĕвесене юсассине, тарăнлатассине тимлĕхе илнĕ. Çапла висĕмçул Çĕрпелти Комсомольская урамри, пĕлтĕр Коммунистическая урамри пĕвесене те юшкăнран тасатнă.

Каçхине урамсенче çутă пулманни чылай çынна пăшăрхантарнă, калаçтарнă. Халĕ çак ыйту та татăлнă темелле. Электроюсав ĕçĕсене кашни ялтах ирттернĕ, юпасем çине пĕтĕмпе светодиодлă 223 лампа вырнаçтарнă. Ĕç хакĕ – 1,5 млн тенкĕ.

Çĕрпел пуян инфраструктурăпа чăннипех те мухтанма пултарать. Социаллă объектсем кунта ал тупанĕ çинчи пек вĕçех пĕр вырăнта вырнаçнă: администраци çурчĕ те, шкулĕ те, культура çурчĕ те, врач офисĕ те, кану паркĕ те, лавкка та... Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсене халалласа лартнă мемориал тата мĕнлерех чаплă!





■ *Çĕнелнĕ шкул ытарлăн кĕтсе илет.*



■ *Хурăнсур Çармăспа Çĕрпел хушшинчи çул юсавĕ.*



■ *Çĕнелнĕ врач офисĕ.*

Çĕрпелте вăрçă, ĕç ветеранĕсене уйрăмах асра тытаççĕ. Юбилейлă датăсенче ватă çынсене килĕсерен çӳресе саламласси йăлара. Пархатарлă ку пулăма вырăнти влаç представителĕсемпе пĕрле депутатсем те, культура ĕçченĕсем те хастар хутшăнаççĕ.

Çĕрпелсен тепĕр объектпа та мăнаçланмалли пур. Ку вăл – картина галерейи. Висĕмçул кунта пулнă май, Раççей Патшалăх Думин депутачĕ Алла Салаева вырăнти маçтăрпа Надежда Андреевапа портретсене цифрăласси пирки калаçу пуçарнăччĕ, пулăшма шантарнăччĕ. Çав çулах Чăваш патшалăх художество музейĕн ушкăнĕ картинăсене фотоаппарат çине ӳкерсе илнĕ. Галерейăра пĕтĕмпе Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин 92 ветеранĕн тата 22 тыл ĕçченĕн сăнĕсем мăнаçлăн курăнаççĕ. Вĕсене хăй вăхăтĕнче Чăваш Республикинчи Николай Карачарсков ертсе пынипе чи паллă портретистсем В.Немцев, П.Григорьев-Савушкин, В.Семенов, Э.Юрьев çырнă.

Кăçалхи çулла «Мемориальный комплекс села Янгорчино» хатĕр кĕнеке-альбома ку тăрăхри мухтавлă çынсен тăванĕсене парнелерĕç. «Культура çуртĕнчи галерея – тĕлĕнмелле вырăн, вăл тăван çĕре чăннипех юратнипе, паллă ентешсемпе мăнаçланнипе тулнă. Ку картинăсем паян стена çинчи портретсенче кăна мар, цифра тĕнчинче те ĕмĕрлĕх упранĕç»,– тенĕччĕ Алла Леонидовна.

Пурнăç пахалăхĕ çине медицина пулăшăвне çывăхра илме май пурри те витĕм кӳрет. Çĕрпел тăрăхĕнче пурăнакансем ку енĕпе ырлăха туяççĕ темелле. Салара пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ ĕçлет. Кăçал вăл «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕпе тĕплĕ юсавра çĕнелнĕ хыççăн çĕнĕ «сывлăшпа» ĕçлеме пуçларĕ. Çурта тĕппипе çĕнетнĕ. Тăррине, алăк-чӳречисене, стена-урайсене, çутă системине йăлт улăштарнă. Аякка каймасăрах сывлăха тĕрĕслеттерме пултарни питĕ аван-çке!

Кăçал ку тăрăхра пурăнакансем тата тепĕр савăнăçа та туйрĕç. «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Çĕрпелти вăтам шкул çав тери чаплăн çĕнелчĕ. Малтанхипе танлаштарсан уйрăмлăхĕ чăннипех те пысăк. Шкул тулаш енчен те, шалтан та илĕртет. Кунта хальхи йышши илемлетӳ элеменчĕсем чылай курăнаççĕ. Пӳлĕмсем, коридорсем, спорт залĕ, столовăй дизайнĕпе тыткăнлаççĕ. Актовăй залра та халĕ хăтлă. Стенасене ачалăх, пултарулăх темипе илемлетнĕ... Пĕтĕмĕшле шкулăн тĕплĕ юсавне 61,1 миллион тенкĕ тăкаклана.

Халăх сурсан кӳлĕ пулать, халăх вĕрсен хапха уçăлать тени тĕрĕсех ĕнтĕ. Çĕнĕ проектсене, шухăшсене пурнăçа кĕртме чăн малтанах пĕршухăшлăх кирлĕ. Пĕрлĕхре, килĕшӳре – вăй та, ăнăçу та, çитĕнӳ те. Çĕрпел тăрăхĕнче пурăнакансем яланах çирĕп туслăхпа уйрăлса тăнă. Çавăн пекех – ĕçченлĕхпе. Ку тăрăхра усă курмасăр, пушă выртакан çĕрсем çук. «Янгорчино» тата «Хорнзор» хуçалăхсем çирĕп хуçа аллинче пулнипе совет саманинчен тытăнсах аван ĕçлесе пыраççĕ, ытти хăшпĕр çĕрти пек саланса кайман.

Уйрăмах «Янгорчино» ял хуçалăх кооперативĕ ăнăçлă çулпа пырать. Геннадий Романов ертсе пыракан хуçалăхра паян тĕштырă çитĕнтерессипе, сĕт туса илессипе курăмлă ĕçлесе пыраççĕ. Вырăнтах ĕç пурри вара – чи лайăх ырлăх. Геннадий Васильевич, округ депутачĕ пулнă май, ял çыннисен ыйтăвĕсене татса парас ĕçсене те хастар хутшăнать. Пулăшу алли тăсма та хатĕр.

Ку тăрăхран паллă, мухтавлă çынсем сахал мар тухнă: писательсем те, артистсем те. Çавăн пекех Çĕрпел ен патриотсене те чылай çитĕнтернĕ. Кунти ялсенчен, акă, ятарлă çар операцине те чылайăн хутшăнаççĕ. Вăл шутра – харпăр-хăй ирĕкĕпе кайнисем те.

Ку енче культура сфери те лайăх аталаннă. Вырăнти культура çурчĕсенче тимлекенсем ачасем, аслисем валли тĕрлĕ мероприятисем, тĕлпулусем йĕркелеççĕ. Кунти артистсем округра иртекен концертсемпе фестивальсене маттуррăн хутшăнаççĕ...

Паллах, территори пайĕнче татса памалли, пурнăçламалли задачăсем татах пур. Палăртнă чи пысăк ĕçсен шутĕнче – Çĕрпелти культура çуртне юсасси тата Хурăнсур Çармăсри физкультурăпа спорт центрĕнчи реконструкци ĕçĕсене вĕçлесси. Кусем тĕлĕшпе проектсем пур ĕнтĕ. Çитес çул пуçарулла бюджет программипе Çĕрпелте ачапăча площадки, Кайри Тукайра масар çурчĕ тума, Хурăнсур Çармăсра пĕве тасатма палăртнă.

Хамăр патра çынсен пурнăç условийĕсем мĕнле пуласси ытларах хамăртан, хамăр мĕнле пуçарулла та пĕршухăшлă пулнинчен килет. Çакна Çĕрпел енче пурăнакансенчен ытларахăшĕ тĕрĕс ăнланать. Çавăнпа ĕç те пурнăçланать...

**Светлана ЧИКМЯКОВА**